26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943
МАЙ
4
ЫТЛАРИКУН
93(5330) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Тӑван ҫӗршывӑн боевой приказӗ

Майӑн 1-мӗшӗнче пирӗн пӗтӗм ҫӗршыв Сталин юлташӑн приказне итлерӗ. Ҫав историллӗ документӑн кашни сӑмахӗ совет патриочӗсен чӗрисене кӗрсе вырнаҫрӗ. Кашни сӑмах шухӑш-кӑмӑла хавхалантарать. Кашни сӑмах тӑшмана ҫӗнтересси ҫинчен хӗрӳллӗн ӗмӗтленсе тӑнине татах та ытларах ҫӗклет. Кашни сӑмах пӗтӗм халӑх Гитлерӑн хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсене пӗтӗмӗшпех пӗтерсе тӑкиччен, тӑшмана пӗр сӑмахсӑр парӑнтаричченех хӗҫпӑшала пӑрахса суккиччен тупа тунине палӑртса тӑрать.

Сталин юлташӑн приказӗ мӗнпур халӑхӑн уяври шухӑш-кӑмӑлне хавхалантарса ҫӗклерӗ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи лару-тӑрӑва кура Майӑн 1-мӗшӗнчи ялан демонстрацисем пулмарӗҫ, анчах та совет ҫыннисем ҫав кун пур ҫӗрте те, фронтра та, тылра та пӗр ҫӗре пухӑнса, митингсем ирттерчӗҫ. Сталин юлташ хӗрӳллӗн ӗҫлеме, хӗрӳллӗн вӗренме, тӑшмана ҫӗнӗрен пыра-пыра ҫапмашкӑн хатӗрленсе тӑма чӗнни совет ҫыннисене питех те пысӑк хавхалануна кӗтсе илчӗ.

Сталин юлташӑн приказне фронтра ҫар ҫыннисене вула-вула панӑ. Халӑхшӑн тӑшмана хаяррӑн тавӑракан совет партизанӗсем итленӗ ӑна. Сталин юлташӑн боевой приказне совет партизанӗсем Тӑван ҫӗршывӑн приказӗ вырӑнне йышӑнчӗҫ. Верховный Главнокомандующи хӗллехи ҫапӑҫусенче тунӑ ҫитӗнӳсене ҫирӗплетсе хӑварма тата малалла вӑйлантарма, нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене хирӗҫ тата ҫапӑҫма тухмашкӑн хатӗрленсе тӑма хушни ҫине, хамӑр ҫӗрӗн пӗр пусӑмне те тӑшмана памалла мар тесе хушни ҫине боецсемпе командирсем хӑватлӑн «урра» кӑшкӑрса ответленӗ.

— Юрать, хушнӑ пекех тӑватпӑр, Сталин юлташ!

Пӗр ҫар чӑсӗнче оруди наводчикӗ Николай Смирнов, Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орденӗпе наградӑланӑскер, ҫапла ответленӗ. Вӑл калать:

— Фронтӑн участокне ҫирӗп тытса тӑрапӑр. Ҫапӑҫу искусствине кунӗн-ҫӗрӗн вӗренсе пырапӑр. Эпир хушсассӑнах эпир хамӑрӑн ҫапӑҫури мӗнпур хӑвата тӑшман пуҫӗ ҫине яма вӗренсе ҫитӗпӗр.

Отечественнӑй вӑрҫӑ фрончӗ темиҫе пиншер километра тӑсӑлса выртать. Майӑн 1-мӗш кунӗ—кӗрешӳри пуҫсене пӑхса тухмалли кун пулчӗ. Пур ҫӗрте те, фронтӑн пур участокӗсенче те совет воинӗсем пулас ҫапӑҫусене тухма хатӗр тӑраҫҫӗ. Пур ҫӗрте те совет ҫыннисем кусӗсем тӑшмана куҫаймалли хаярлӑхпа ҫунса тӑраҫҫӗ, вӗсен чӗрисем тӑшмана тупӑ-тупӑ кӗрешме тулнӑ. Вӗсен ҫӑнӗсем пустарулӑ та лӑпкӑ. Вӗсем Сталин юлташӑн приказне итленӗ. Ҫапӑҫусем хаяр та вӑйлӑ пуласси вӗсем пӗлеҫҫӗ. Приказа юлашки сӑмах юлмиччен пурнӑҫа кӗрессине те вӗсем пӗлеҫҫӗ.

— Нимӗҫ захватчикӗсене—вилӗм!

Ҫапла каларӗ Сталин, ҫапла пулать. Вӑл ҫаплах пулать те ӗнтӗ. Сталин юлташӑн приказӗ вӑл — Тӑван ҫӗршывӑн приказӗ.

Тылра та фронтри пек картинӑсем курма пулать. Совет ҫыннисем юратнӑ ҫулпуҫӑн сӑмахне тимлӗн итлерӗҫ. Ҫав сӑмаха вӗсем хӑйсене панӑ приказ пек йышӑнса илчӗҫ. Сталин юлташ фронтшӑн икӗ хут ытларах вӑя ӳстерсе ӗҫлемелле терӗ, халӑха чӗнсе каланӑ ҫав сӑмахсем ҫине ӗҫҫыннисем татах та лайӑхрах, ытларах ӗҫлеме, фронта ҫӗнӗрен продукци хушса пама пулса ҫӗнӗ обязательствӑсем илеҫҫӗ.

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи Май уявӗнче хӑшпӗр предприятисем планран ирттерсе ӗҫлерӗҫ. Ҫав кун вӗсем васкавлӑ заданисене пурнӑҫа кӗртрӗҫ. Верховный Главнокомандующин приказне итленӗ хыҫҫӑн, совет патриочӗсем станоксем умне тӑрса, нормӑсене ирттерсе пурнӑҫа кӗртрӗҫ.

Сталин юлташӑн приказӗ вӑл — халӑх ирӗкӗ, вӑл ӗнтӗ боевой ӗҫӗн ҫӗнӗ ҫӗкленӗвӗнче пурнӑҫа кӗрсе пыма тытӑнчӗ те. Ҫакӑн пек ӗнтӗ пирӗн ҫӗршыври паха традицисем—ҫулпуҫ приказӗсемпе вӑл чӗнсе каланисене ӗҫҫыннисем яланах производствӑри ҫӗнӗ ҫитӗнӳсемпе ответлеҫҫӗ.

Паян эпир Кузнецкри Сталин ячӗпе тӑракан Ленин орденлӗ металлурги комбинатӗнчи рабочисемпе инженерсем, техниксем тата служащисем Совет Союзӗнчи мӗнпур металлургсене горнякӗсене чӗнсе каланине пичетлетпӗр.

Кузнецкри металлурги комбинатӗнчи рабочисем металлургсен Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвне пуҫарса яракансем пулса тӑраҫҫӗ. Пӗлтӗрхи Май уявӗ вӗсем ӑмӑрту пуҫарса ярасси ҫинчен чӗнсе каларӗҫ. Вӗсем ӑмӑртӑва пуҫарса яракансем кӑна мар, ӑмӑртӑвӑн чи лайӑх участникӗсем пулчӗҫ. Обороннӑй Государственнӑй Комитечӗн куҫса ҫӳрекен тӑватӑ Ялавне ҫӗнтерсе илчӗҫ вӗсем. Кузнецк комбинатне Ленин орденӗпе наградӑланӑ. Чи лайӑх работниксенчен 400 ҫын Совет Союзӗн орденӗсемпе медалӗсене илме тивӗҫлӗ пулчӗҫ.

Майӑн 1-мӗш кунӗнче Кузнецк комбиначӗн коллективӗ Май уявӗ умӗнхи ӑмӑртӑвӑн итогӗсене пӗтӗмлетрӗ. Апрельре мартинчен ытларах металл шӑратса кӑларнӑ. Главнӑй Командованин фондне ҫӗнӗрен пиншер тонна хурҫӑ панӑ. Вӗсем Кузнецк комбинатӗнчи рабочисем итогӗсене те пысӑк ҫитӗнӳсемпе пӗтӗмлетрӗҫ. Вӗсем Сталин юлташӑн приказне ҫав тери пысӑк хавхаланупа итлерӗҫ.

«Анчах та фашистла нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан вӑрҫӑ Хӗрлӗ Ҫара орудисем, танксем, самолетсем, пулеметсем, автоматсем, минометсем, боеприпассем, снаряжени... татах та ытларах парса тӑма хушать», тенӗ Сталин юлташ хӑйӗн приказӗнче. Ҫав сӑмахсем вӗсене тӳрех металлургсене пырса тивеҫҫӗ. Чи малтан—металл. Металл шӑратакансем тӑван Сталина 1943 ҫулӑн иккӗмӗш кварталӗнче планран ирттерсе 8.000 тонна чугун, 10.000 тонна хурҫӑ, 8.000 тонна прокат, 5.000 тонна кокс, 6.000 тонна тимӗр руди, 5.000 тонна марганец руди пама пулса ӗҫлӗн ответлеҫҫӗ.

Кузнецкри металлургсем ҫапла чӗнеҫҫӗ: «Фронта тӑван ҫӗршыва ытларах металл парассишӗн, танксене, самолетсене, хӗҫпӑшалсене боеприпассене пуҫа кӑларассишӗн ҫӗтерме кунран-кун планран ирттерсе продукци парса тӑрассишӗн, ҫапла вара вӑхӑтлӑ тӑшмана хаяррӑн ҫапса аркатма, хамӑрӑн таса Тӑван ҫӗршыва нимӗҫсен фашистла мерзавецӗсенчен хӑтарса ирӗке кӑларма хамӑрӑн юратнӑ геройла Хӗрлӗ Ҫара малалла кунӗ-ҫӗрӗн пулӑшма пӗтӗм вӑй хурса ӗҫлер. Хамӑрӑн мӗнпур вӑйпа геройла Хӗрлӗ Ҫара пулӑшар, пирӗн мухтавлӑ Хӗрлӗ Флота пулӑшар ӗҫлер пе парар!» Кузнецк комбинатӗнчи металлургсем хӑйсен професси тӗлӗшӗнчи тусӗсене ҫапла чӗнсе калаҫҫӗ. Вӗсен сассине пур ҫӗрте те илтӗҫ. Вӗсем пуҫарнӑ ӗҫе мӗнпур металлургсем хутшӑнӗҫ. Тӗрӗссипе илсен, вӗсем ҫапла чӗнсе мӗнпур ҫӗршыва ҫулпуҫӑн вӗсен шухӑшӗ вӑл — мӗнпур совет патриочӗсен шухӑшӗ, ҫӗнтерӗве ҫывхартас тесе икӗ хут вӑя ӳстерсе ӗҫлес шухӑш пулса тӑрать.

Сталин юлташӑн приказӗ ҫине Совет Союзӗнчи мӗнпур хуласемпе мӗнпур ялсенче ҫапла ответлеҫҫӗ ӗнтӗ. Заводӑн цехӗнче-и, колхоз уйхирӗнче-и, пур ҫӗрте те совет ҫыннисем фронтри боецсем пекех калаҫҫӗ.

— Юрать, Сталин юлташ! Сирӗн приказ — вӑл Тӑван ҫӗршыв приказӗ!

Верховный Главнокомандующи Совет Союзӗн Маршалӗ Сталин юлташ совет халӑхӗн иксӗлми ирӗкӗпе вӑй-хӑватне палӑртрӗ. Халӑх хӑйӗн юратнӑ ҫулпуҫӗн тата учителӗн приказне пурнӑҫа кӗртӗ.

Тӑшмана ҫапса аркататпӑр! Ҫӗнтерӳ пирӗн алӑра пулать!

(«Правда», майӑн 3-мӗшӗнчи умстатья).

Ирӗке тухнӑ районсене пулӑшма

СЕНТЕРВАРРИ. Нимӗҫ оккупанчӗсенчен ирӗке кӑларнӑ районсене пулӑшасси Шуршӑл ялсоветӗнчи «Ҫӗнӗ ял» колхозра анлӑн сарӑлчӗ. Колхозниксем кӗске вӑхӑт хушшинчех 600 килограмм ытла ҫӗрулми пухрӗҫ. Колхоз хӑй енчен 500 килограмм ҫӗрулми пачӗ. Ирӗке кӑларнӑ районсене пулӑшасси малалла пырать

И. Осипов

* * *

КАНАШ. Вӑтакас Татмӑшри Чкалов ячӗпе тӑракан колхоз нимӗҫ оккупанчӗсенчен ирӗке кӑларнӑ районсене пулӑшма 2 центнер ҫӗрулми, 2 центнер тулӑ, пӗр сурӑх пӳтекки, колхозниксем хӑйсен хуҫалӑхӗсенчен 6 центнер ҫӗрулми пачӗҫ. Колхоз председателӗ К. Ярансков икӗ чӑх пачӗ.

Анаткас Татмӑшри «Париж Коммуни» колхоз 4 центнер ҫӗрулми, пӗр центнер вика, пӗр сурӑх, 2 чӑх пачӗ. Нимӗҫ оккупанчӗсенчен ирӗке кӑларнӑ районсене пулӑшасси ытти колхозсенче те вӑйланса пырать.

Т. Турхан.

Ҫулпуҫӑн приказӗ ҫине ответлесе республикӑри ӗҫҫыннисем ӗҫри ҫӗнӗ ҫитӗнӳсемшӗн кӗрешеҫҫӗ

Ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума чӗнекен приказ

КӲКЕҪ. Колхоз активӗ: председательсем, бригадирсем, агитаторсем, вулавҫӑсем, ӗҫҫынни депутачӗсем майӑн 1-мӗшӗнче ялсовет исполкомӗсене пухӑнса Верховный Главнокомандующин Сталин юлташӑн приказне радио тӑрӑх итлерӗҫ. Колхоз активӗ ҫулпуҫӑн боевой приказне колхозниксене тӗплӗн ӑнлантарса пама мобилизациленчӗ.

Ыран-паянах Сталин юлташӑн приказӗ пичетленнӗ хаҫатсем колхозсене ҫитеҫҫӗ. Колхозсенчи коммунистсемпе комсомолецсен задачи — вӑл приказа кашни колхознике тӗплӗн ӑнлантарса парасси, Сталин юлташӑн приказне ӑнлантарса ҫуракине пысӑк пултарулӑхпа туса ирттерме колхозниксен пӗтӗм массине ӗҫе ҫӗклесси пулать.

Чугурово ялсоветӗнче Сталин юлташӑн боевой приказне пурӗ 31 ҫын итлерӗҫ. Приказа итленӗ хыҫҫӑн вӗсем татах та лайӑхрах ӗҫлеме хавхаланса колхозсене саланчӗҫ. Агитатор Федорова юлташ, Сталин юлташӑн боевой приказне итленӗ хыҫҫӑнах, «Чӑваш Коммуни» колхозра ҫураки тӑвакансем патне уя тухса, вӗсене приказ ҫинчен каласа пачӗ.

Е. Озиков.
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ

Сталин юлташӑн боевой приказӗ ҫине ӗҫпе ответлер

ҪӖМӖРЛЕ, майӑн 3-мӗшӗ. (**Хамӑр корр., телефонпа**). Районри предприятисемпе учреждейисенче Верховный Главнокомандующин Сталин юлташӑн Майӑн 1-мӗшӗ ячӗпе панӑ боевой приказне радио тӑрӑх итленӗ хыҫҫӑн рабочисемпе служащисен митингӗсем пулса иртрӗҫ. Ҫулпуҫӑн боевой приказне ырӑ кӑмӑлпа йышӑнса, рабочисемпе работницӑсем, колхозниксемпе колхозницӑсем малашне тата лайӑхрах ӗҫлеме, фронта пулӑшассине вӑйлатма пулчӗҫ.

— Сталин юлташ пире рабочисемпе служащисене фронта малашне те активлӑн пулӑшма чӗнет. Апрель уйӑхӗнче эпир ӗҫ нормине тӑтӑшах 200 процент тултарса ӗҫлерӗмӗр. Ҫулпуҫ приказӗ ҫине ответлесе, эпир малашне те ырми-канми ӗҫлеме сӑмах паратпӑр, — терӗҫ «Труженик» заводри стахановецсем Зубрилина тата Поломордвинов юлташсем.

«Труженик» заводӑн коллективӗ производство планне апрель уйӑхӗнче 118,4 процент тултарнӑ. Май умӗнхи социализмлӑ ӑмӑртӑва малалла тӑсса, Сталин юлташӑн приказне пурнӑҫлас ӗҫе тӗпе хурса, завод коллективӗ май уйӑхӗнче татах та ытларах вӑй хурса ӗҫлеме пулчӗ.

Комбинатри рабочисем те Верховный Главнокомандующин Сталин юлташӑн приказӗпе хавхаланса, ӗҫ тухӑҫлӑхне татах ӳстерме обязательство илеҫҫӗ.

Х. Лисин.

БОЕЦСЕМ ҪУЛПУҪ ПРИКАЗНЕ ИТЛЕРӖҪ

Майӑн 1-мӗшӗнче ирхине ирех пӗр чаҫри красноармеецсем радио репродукторӗсем патӗнче тӑрса тухрӗҫ. Вӗсем ҫулпуҫӑн Сталин юлташӑн приказне итлеме килнӗ. Диктор калаҫма пуҫласса вӗсем чӑтаймасӑр кӗтсе тӑчӗҫ. Хӗрлӗ Мускавран пӗрремӗш сӑмахсем илтӗнчӗҫ. Хамӑрӑн юратнӑ полководецӑн, Верховный Главнокомандующин Совет Союз Маршалӗн Сталин юлташӑн ӑслӑ сӑмахӗсене боецсем сывлӑш кӑлармасӑр итлесе тӑчӗҫ. Приказа итлесе пӗтерсен, Воздухов боец мӗнпур красноармеецсен туйӑмӗсемпе шухӑшӗсене каласа пачӗ. Вӑл ҫапла каларӗ:

— Верховный Главнокомандующин приказне итленӗ чухне манӑн ҫапла калас килчӗ: «Сталин юлташ, эпӗ, красноармеец Воздухов, Сирӗн приказа чыслӑн пурнӑҫа кӗртӗп, ирсӗр тӑшмана татӑклӑн ҫӗмӗрсе тӑкма кӗске вӑхӑтра хатӗрленсе ҫитес тесе, ҫапӑҫури пултарулӑха ывӑнма пӗлмесӗр лайӑхлатса пырӑп».

Майӑн 1-мӗшӗнче 11 сехетре кӑнтӑрла часть командирӗпе унӑн заместителӗ кашни подразделенирех красноармеецсемпе командирсен стройӗ умӗнче Сталин юлташӑн приказне вуласа пачӗ. Подразделенисенче ҫулпуҫӑн приказӗпе пайлашас майпа красноармеецсен митингӗсем пулса иртрӗҫ.

Волков капитанӑн подразделенийӗнче митинг пырать. Пӗр чаҫри партбюро секретарӗ капитан Амелетин сӑмах калать. Вӑл боецсемпе командирсене Верховный Главнокомандующин, пире ҫӗнтерӳ патне илсе пыракан ҫулпуҫӑн приказне пурнӑҫа кӗртме пӗтӗм вӑя, пӗтӗм пултарулӑха пама чӗнет.

Красноармеецсен митингӗнче курсант Лозовик ҫапла калать:

— Гитлер вӑл — ҫичӗ пуҫлӑ ҫӗлен. Хӗрлӗ Ҫар унӑн пуҫӗсене ҫапа-ҫапа ҫӗмӗрчӗ ӗнтӗ. Вӑл хӑйӗн пуҫне сыватма темле тӑрӑшсан та, унӑн ӗҫӗ тухаймӗ. Мӗншӗн тесен хӗллехи вӑхӑтра Хӗрлӗ Ҫар ӑна вӑйлӑн пыра-пыра ҫапрӗ, эпир ӑна ҫуркунне те, ҫулла та ҫирӗппӗн пырса ҫапӑпӑр. Сталин юлташӑн приказӗпе хавхаланса, пирӗн мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫар ӑна вӑйлӑн пырса ҫапса яланлӑхах пӗтерсе тӑкӗ. Эпир, Хӗрлӗ Ҫарӑн запаслӑ чаҫӗсенчи красноармеецсем, отлично вӗренсе хамӑрӑн пӗлӗве ӳстерсе пырӑпӑр, вара Гитлер ҫарӗсене татӑклӑнах ҫапса аркатма фронта кайӑпӑр. Ҫӗнтерӳ пирӗнтен килет. Ҫавӑнпа эпир пулас ҫапӑҫусене хатӗрленме хамӑрӑн пӗтӗм вӑя хурӑпӑр, хамӑрӑн чаҫӑн чысӗпе традицийӗсене ҫӳлте тытӑпӑр.

Ҫавӑн пекех митингра Волков, Сабитова тата ытти юлташсем те тухса каларӗҫ. Вӗсем Сталин юлташӑн приказне пурнӑҫа кӗртессишӗн вӑй-хала шеллемесӗр кӗрешме пулчӗҫ:

Тепӗр подразделенири митингра красноармеец Иванов сӑмах калать:

— Сталин юлташ пире ҫӗнтерӳ патне каймалли ҫула кӑтартса пачӗ, — тет Иванов юлташ. — Юнлӑ тӑшмана хӗвелтухӑҫӗнче Хӗрлӗ Ҫар тата хӗвеланӑҫӗнче пирӗн союзниксем вӑйлӑн пыра-пыра ҫапрӗҫ. Ҫавӑн пек тепӗр икӗ-виҫӗ хут пырса ҫапсан, Гитлер ҫарӗ арканса кайӗ. Ҫӗнтерӳ валли эпир пурне те тӑвӑпӑр. Сталин юлташ пире хамӑрӑн мастерлӑха ывӑнма пӗлмесӗр лайӑхлатса пыма чӗнет, Верховный Главнокомандующин ҫак приказне пурнӑҫа кӗртес тесе, эпир пурне те тӑвӑпӑр. Сталин юлташ пире дисциплинӑна ҫирӗп тытма, организованно та йӗркеллӗ пулма чӗнет, ҫак приказа чыслӑн пурнӑҫа кӗртӗпӗр тесе, эпир Сталин юлташа тупа тӑватпӑр.

Ҫав кунах Сталин юлташӑн приказне вӗренес тӗлӗшпе агитаторсен семинарӗсем пулса иртрӗҫ. Халӗ политработниксем пурте Верховный Главнокомандующин приказне боецсене тӗплӗн ӑнлантарса парас тӗлӗшпе ӗҫлеҫҫӗ.

Сергей Иванов.

Общежитисене йӗркене кӗртеҫҫӗ

КАНАШ. Общежитисене тасатса йӗркене кӗртес тӗлӗшпе пыракан Пӗтӗм Союзри уйӑхлӑха хутшӑннӑ хыҫҫӑн хулари комсомолецсемпе ҫамрӑксем общежитисене тирпейлес тӗлӗшпе чылай ӗҫсем турӗҫ. Пир-авӑр фабрикинчи комсомолецсем (ВЛКСМ комитечӗн секретарӗ Каплан юлташ) виҫӗ общежити юсама тытӑннӑ. Халӗ вӗсем стенасемпе чӳречесене ҫуса тасатнӑ. Хӑйсен вӑйӗпех чӳречесем валли занавескӑсем хатӗрленӗ. Паянхи кун тӗлне 4 пукан ҫӗнӗрен тунӑ. Общежити умне ҫамрӑксен пахчи тума тытӑннӑ.

Ҫавӑн пекех вагонсем юсакан заводри комсомолецсем те (ВЛКСМ Комитечӗн секретарӗ Коваленко юлташ) рабочисем пурӑнакан кашни общежитие тасатса йӗркене кӗртессишӗн кӗрешеҫҫӗ. Вӗсем тӑрӑшнипе чылай общежитисенче кӑмакасене юсаса шуратнӑ, 10 пукан, 12 комнӑта валли вентиляци тунӑ. Хӑшпӗр общежитисен стенисене штукатурка тунӑ.

Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Центральный Комитечӗпе СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗнчен

Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Центральнӑй Комитечӗпе СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ ҫав тери палӑрса тӑракан совет деятелӗ—РСФСР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗн заместителӗ Константин Димитриевич Памфилов вилни ҫинчен хурланса пӗлтереҫҫӗ.

Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Центральный Комитечӗ.

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ.

ССР Союзӗн Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитетӗнче

ССР Союзӗн Совнаркомӗпе ЦК ВКП(б) **ҫапла йышӑннӑ:**

1. К. Д. Памфилов юлташа пытарма комисси тӑвас, унта ҫак юлташсене кӗртес: А. П. Косыгина (председатель), Г. З. Перова, А. Н. Сухова, В. П. Пронина тата Е. М. Ярославские.
2. Коммунальнӑй хуҫалӑх академине К. Д. Памфилов ятне парас.
3. К. Д. Памфилова пытарассине государство ҫине илес.
4. К. Д. Памфилов юлташа Хӗрлӗ Площадьре Кремль стени патне пытарас.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Майӑн 1-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Майӑн 1-мӗшӗнче фронтсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

* * *

Апрелӗн 30-мӗшӗнче фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче пирӗн авиаци чаҫӗсем нимӗҫсен войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 20 автомашининчен кая мар пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, боеприпассен 2 складне сирпӗнтернӗ, артиллерин 6 батарейине пусарнӑ, тӑшман пехотине пӗр ротӑна ҫити сапаласа янӑ е пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Кубань ҫинче пӗр соединенин чаҫӗсем хастарлӑн кӗрешсе пынӑ тата гитлеровецсен контратакисене сире-сире пӑрахнӑ. Совет артиллерисчӗсем, пехотӑна пулӑшса пырса, артиллерипе минометсен 48 батарейине пусарнӑ. Тӑшманӑн дзочӗсемпе блиндажӗсене нумай аркатнӑ.

Пирӗн летчиксем сывлӑшри ҫапӑҫусенче пӗр кун хушшинче нимӗҫсен 24 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Хӗвеланӑҫ фронтӗнче пирӗн чаҫсем 200 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Пӗр чаҫӑн разведчикӗсем тӑшман тӑракан вырӑна кӗрсе кайса, икӗ нимӗҫ дзотне вӗсен гарнизонӗсемпе пӗрлех сирпӗнтернӗ.

* * *

Балаклейӑран кӑнтӑртарахра пирӗн чаҫсем нимӗҫ обозне аркатнӑ тата гитлеровецсен икӗ взводне пӗтерсе тӑкнӑ. Тӗрлӗ грузсем тиенӗ 150 лава пӗтерсе тӑкнӑ тата тӑшманӑн миномет батарейине пусарнӑ. Пехота хӗҫпӑшалӗнчен персе тӑрса, нимӗҫсен 3 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Волхов фронтӗнче тӑшман ҫине сайра-хутран персе тӑнӑ. Пирӗн артиллеристсем тӑшманӑн 2 миномет батарейине пусарнӑ, 2 противотанковӑй оруди, 3 миномет пӗтерсе тӑкнӑ тата тӑшманӑн 4 блиндажне аркатнӑ. Пӗр участокра пӑшалсемпе пулеметсенчен персе, пирӗн оборонӑн малти хӗррине пыма хӑтланнӑ нимӗҫ разведчикӗсен группине пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Полесье облаҫӗнчи районсенчен пӗринче кӗрешекен партизансен отрячӗ ҫӗрле нимӗҫ гарнизонне тапӑннӑ. Нимӗҫсемшӗн ку ӑнсӑртран килсе тухнӑ япала пулнӑ. Кӗске ҫапӑҫура совет патриочӗсем тӑшман гарнизонне аркатса тӑкнӑ тата 40 ҫынна тыткӑна илнӗ. Тытса илнӗ трофейӑсем хушшинче 4 пулемет, винтовкӑсем тата боеприпассем нумай. Полесье партизанӗсен тепӗр отрячӗ кӗрешекен районта пирӗн енне нимӗҫ армине ирӗксӗрлесе мобилизациленӗ 54 чехословак куҫнӑ. Тарса килекенсем хӑйсен пӗтӗм хӗҫпӑшалне илсе килнӗ. Вӗсем ҫапла каланӑ: «Эпир Гитлерӑн тата тӑван ҫӗршыва чуралантарнӑ фашистла тискерсемшӗн юн тӑкасшӑн мар».

* * *

Нимӗҫсен 15-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 106-мӗш полкӑн 8-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ ефрейтор Пауль Клайзен ҫапла каласа панӑ: «Нимӗҫсен 6-мӗш армине Сталинград патӗнче пӗтерсе тӑкни ҫинчен эпир Францире чухнех пӗлсеччӗ. Ҫав йывӑр чӑнлӑха халӑхран пытарма май килменнине пула, нимӗҫ хаҫачӗсем Паулюспа унӑн армин паттӑрлӑхне ырлама тапратрӗҫ. Анчах та эпир йӗркесем хушшипе вулама вӗрентӗмӗр. Юлташсем хушшинче салтаксем ҫапла калатчӗҫ: «Ӗҫ нимӗҫ армине пӗтӗмпех аркатса тӑкасси патне пырать», тетчӗҫ. Пирӗн дивизие Хӗвелтухӑҫ фронтне ярассинчен пурте питӗ хӑратчӗҫ. 1941 ҫулта Мускав патӗнче пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑ Шмидт тата Шликерман салтаксем Хӗвелтухӑҫ фрончӗ ҫинчен пире тӗрлӗ хӑрушлӑхсем каласа паратчӗҫ. Шликерман ҫапла калатчӗ: «Российӑна каяччен кунтах вилес. Эпӗ унтан пӗрре хӑтӑлса тухрӑм, анчах тепре леккен хӑтӑлайрас ҫук», тетчӗ. Дивизие Хӗвелтухӑҫ фронтне ярасси ҫинчен приказ килсен, Келлер салтак хӑйне-хӑех кӑкӑртан пӑшалпа пенӗ. Тепӗр салтак ҫакӑнса вилнӗ. Тухса каяс умӗн салтаксен пӗр группи тарса кайнӑ. Хӗвелтухӑҫ фронтӗнче пирӗн рота виҫӗ ҫапӑҫура пулса пысӑк ҫухатусем турӗ. Салтаксем ҫавӑн пирки питӗ шикленеҫҫӗ, вӗсем ҫӗнтерӳ пулассине шанмаҫҫӗ».

Майӑн 2-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Майӑн 2-мӗшӗнче фронтсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

* * *

Иртнӗ эрнере, апрелӗн 25-мӗшӗпе майӑн 1-мӗшӗ хушшинче, сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата тӑшман аэродромӗсем ҫинче нимӗҫсен 281 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫав вӑхӑт хушшинче пирӗн 105 самолет пӗтнӗ. Пирӗн карапсем Баренц тинӗсӗнче тӑшман транспортне путарнӑ.

* * *

Майӑн 1-мӗшӗнче пирӗн авиаци чаҫӗсем фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗҫсен 5 танкӗнчен кая мар тата войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 10 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, артиллерин 4 батарейине пусарнӑ, тӑшманӑн танкерне, пулӑшуллӑ 2 карапне тата 3 баржине сиенленӗ.

* * *

Новороссийск районӗнче нимӗҫсем темиҫе кун каярах пирӗн позицисене тытса илес шутпа пысӑк вӑйсемпе наступлени пуҫласа янӑ. Авиаци пулӑшнипе усӑ курса, тӑшман пирӗн чаҫсене ҫӗмӗрес шутпа 6 кун хушши вӑйлӑ атакӑсем тунӑ. Пӗр соединенин боецӗсем гитлеровецсен пур атакисене те сирсе пӑрахнӑ, вӗсене пысӑк ҫухатусем кӳнӗ. Ҫав ҫапӑҫусенче тӑшманӑн 7.000 салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тӑкнӑ, нимӗҫсен 25 танкӗпе бронемашинине персе ҫӗмӗрнӗ е сунтарса янӑ. Тӑшманӑн халран кайнӑ чаҫӗсем нимӗнле ӑнӑҫу та тӑваймасӑрах атакӑсем тума чарӑннӑ.

* * *

Хӗвеланӑҫ фронтӗнче пирӗн подразделенисем тӑшманӑн разведка тӑвакан темиҫе отрядне сапаласа янӑ, 150 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ. Пӗр чаҫри снайперсен ушкӑнӗ икӗ кун хушшинче нимӗҫсен 20 салтакне тата пӗр офицерне вӗлернӗ. Снайпер Евтухов юлташ 5 нимӗҫе вӗлернӗ, Чубанов, Волков снайперсем кашниех виҫшер нимӗҫе вӗлернӗ.

* * *

Балаклейӑран кӑнтӑртарахра нимӗҫ пехотин пӗр роти шыв урлӑ каҫса пирӗн войскӑсем хушшине кӗрсе кайма хӑтланнӑ. Пӗр чаҫӑн боецӗсем тӑшман ҫине хӑрӑссӑн персе ӑна каялла чакарнӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшманӑн темиҫе вуншар вилли выртса юлнӑ.

* * *

Дон ҫинчи Ростовран хӗвеланӑҫнерехре, артиллерипе минометсенчен персе, тӑшманӑн 5 дзотне аркатнӑ, артиллерин 3 батарейине тата минометсен 2 батарейине пусарнӑ, тӑшман пехотин пӗр батальонне ях̆ӑн сапаласа янӑ е пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Гвардин старши лейтенанчӗ Хохлов командир пулса ертсе пыракан летчик-штурмовиксем тӑшман тылӗнчи чугунҫул станцине тапӑннӑ. Совет самолечӗсем, зенитнӑй бата-

(Вӗҫӗ 2-мӗш страницӑра).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 2-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

рейăсем пеннне пăхмасăрах боеприпассем турттарса пыракан чугунçул эшелонне сирпĕнтернĕ.

* * *

Калинин облаçĕнче кĕрешекен партизансен темиçе отрячĕ тăшмаăн опорнăй пунктне хупăрласа илнĕ те, ăна штурмласа йышăнса илнĕ. Ансăртран пырса çапнине пула нимĕçсем пĕтлĕн хирĕç тăма та пултарайман. Партизансем 80 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Икĕ пулемет, темиçе вуншар автоматпа винтовка, медикаментсемпе аптека, япаласен складне тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Калинин партизанĕсен тепĕр отрядĕнчи подрывниксен группи нимĕçсен çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Паровоз тата 22 платформа арканнă. 16 платформа çинче пулнă автомашинăсем пĕтĕмпех юрăхсăра тухнă.

* * *

Хĕрлĕ Çарăн боецĕсем тата командирсемпе политработникĕсем Верховный Главнокомандующин Совет Союз Маршалĕн Сталин юлташăн Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе кăларнă приказне çав тери хавхаланса кĕтсе илнĕ. Майăн 1-мĕшĕнче ирхине тата кăнтăрла вăл приказа пур чаçсемпе подразделенисенче те вуласа панă. Нумай чаçсемпе гарнизонсенче, май килнĕ çĕрте, пысăк хавхаланупа иртнĕ массăллă митингсем пулнă. Митингра тухса каланă боецсем, командирсемпе политработниксем Верховный Главнокомандующин приказне пурнăçлас ĕçе пĕтĕм вăя хума хатĕррине палăртнă.

Хĕвеланăç фронтĕнчи пĕр стрелковăй чаçра старши сержант Евсеев юлташ сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл çапла каланă: «Сталин юлташăн приказĕ пире çапăçусен анлă программине кăтартса парать. Верховный Главнокомандующи кăтартса панисене асра тытса, эпир кашни кунах çапăçма вĕренсе пырăпăр. Хĕрлĕ Çар хăйĕн союзникĕсен çарĕсемпе пĕрле фашистла тискер кайăкăн çурăм шăммине çапса хуçса хамăрăн совет çĕрне нимĕç захватчикĕсенчен хăтарас кун инçе мар ĕнтĕ», тенĕ. Кăнтăрти фронтра малти хуралта тăракан красноармеец Резнюк юлташ çапла каланă: «Эпĕ 14 нимĕçе вĕлертĕм. Гитлерла бандитсене малашне те пĕр шеллемесĕр вĕлерсе пыма пулатăп. Эпĕ тăнă çĕртен хам сывă пулнă чухне тăшман иртсе каяс çук». Пĕр чаçри снайпер Григорьев юлташ хăйĕн сăмахĕнче çапла каланă: «Эпĕ 60 нимĕçе вĕлертĕм. Сталин юлташ приказĕ çине ответлесе, çакăнтан виçĕ хут ытла вĕлерме тата çĕнĕрен 10 снайпер хатĕрлеме сăмах паратăп», тенĕ.

Хĕрлĕ Çарăн тылри чаçĕсенчи митингсенче боецсемпе командирсем Действующи армине хăвăртрах каясшăн пулнине палăртнă. Пулеметчик Кретчин командование çапла рапорт çырса панă: «Эпĕ отлично перетĕп, çапăçăва тухма хатĕр. Мана фронта яма ыйтатăп, унта эпĕ Сталин юлташ приказне чыслăн пурнăçлама пултарăп», тенĕ.

Çураки ĕçĕсене хăвăртлатар, малта пыракансемпе танлашар!

ЛАЙĂХ ĔÇЛЕКЕН БРИГАДА ХĔРЛĔ ЯЛАВ ИЛЧĔ

СЕНТЕРВАРРИ. МТС-ăн бригадисем пурте колхозсен хирĕсенче. Анчах тракторсемпе суха тăвас ĕçĕн хăвăртлăхĕ халĕ те кирлĕ пек ӳссе пыни çук-ха. Майăн 1-мĕшĕ тĕлне вĕсемпе пурĕ те 150 гектар çеç сухаланă.

Кăçал Сĕнтĕрвăрри МТС-ĕн коллективĕ умĕнче пысăк задача тăрать. Иртнĕ çулсенче кая юлса пынине тĕпренех пĕтермелле, кăçал тракторсемпе çĕнĕлле, фронта тивĕçлĕ пек ĕçлесе кăтартмалла, трактористсем колхозниксен шанчăкне тивĕçтермелле, вĕсене ялхуçалăх ĕçĕнче пысăк пулăшу памалла. Тухăçлă ĕçлесе республикăри малта пыракан МТС-семпе танлашма Сĕнтĕрвăрри МТС-ĕн пур майсем те пур.

Тракторсемпе туллин усă курса, вĕсене тирпейлĕн тыткаланипе тата трактористсем хавхаланса ĕçленипе МТС-ăн 1-мĕш номерлĕ бригади çуракин малтанхи кунĕсенчех пысăк çитĕнӳ турĕ. 1-мĕш бригадăра виçĕ трактор. Вĕсем «СТЗ», «ЧТЗ» тата «У-2» маркăллă тракторсем. Трактор бригадин бригадирĕ Григорьев юлташ.

Бригада Сталин ячĕпе тăракан колхоза виçĕ талăк хушшинче 50 гектар сухаласа пачĕ. Нихăш тракторĕ те чарăнса тăмарĕ, трактористсем кашнинех нормăсене иртттерсе тултарчĕç тата сухаласси́не те паха сухаларĕç. Çуракинче малтанхи кунах ытти бригадăсенчен тимлĕрех ĕçленĕшĕн Майăн 1-мĕшĕнче МТС дирекцийĕпе политотдел Григорьев юлташ ертсе пыракан 1-мĕш бригадăна хăйсен куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне пачĕç. МТС-ри ытти трактор бригадисем те 1-мĕш бригадăри трактористсенчен пример илмелле, лайăхрах та тимлĕрех ĕçлеме тăрăшмалла.

Малта пыракансемпе танлашмалла

СОВЕТСКОЕ, майăн 3-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш çуракине районри колхозсем апрелĕн 20—25-мĕшĕсенче тухса, майăн 1-мĕшĕ тĕлне тĕштырăсене пурĕ 3.197 гектар акрĕç.

Нумай колхозсенче çураки ĕçĕсем йĕркеллĕн пулса пыраççĕ, колхозниксем питĕ хастарлăн ĕçлеççĕ. «Новый быт» колхоз çурхи тырăсем акмалли плана 75 процент чухлĕ тултарчĕ. Кунта сеялкăсемпе туллин усă курса, хăвăрт акаççĕ, тăпрана 17—19 сантиметр тарăнĕш сухалаççĕ.

«Трактор» колхозра та тĕштырăсене çеç мар, пăрçа йышши культурăсене те сеялкăсемпе акаççĕ, çураки ĕçĕсем хăвăрт пулса пыраççĕ. Колхоз ыран-паянах çураки планне тултарать.

Анчах та хăшпĕр колхозсен руководителĕсем çуракинче ĕç вăйне çирĕп организацилесе пыманни те курăнать. «Сатурн» колхоз çуракине кая юлса тухрĕ. Тата халĕ те кунта ĕç хăвăртлăхĕ çителĕклĕ мар-ха. Кунта мĕнпурĕ те 9 гектар çеç акнă. Колхоз председателĕ Жудков юлташ çураки ĕçĕсене ответлăха çирĕп туйса ертсе пымасть. Вăйлă тырпул туса илес ответлă ĕçре кая юлса пыни килĕшмест. Колхоз председателĕсен, ялсенчи парторганизацисемпе комсомол организацийĕсенчи коммунистсемпе комсомолецсен çураки ĕçĕсене лайăхрах ертсе пымалла. Тырăсене вăхăтра акса хăварма тăрăшмалла, ĕçре малта пыракансемпе танлашмалла.

Г. Михайлов.

Уйхирте стахановла ĕçлĕпĕр

Иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче Çĕрпӳ районĕнчи «Молодая сила» колхоз членĕсем фронт ыйтнă пек ĕçлерĕç. Партипе правительство лартнă задачăсене эпир пурне те хастарлăн пурнăçласа пытăмăр. Тырăсене вăхăтра акса, вăхăтра вырса пуçтартăмăр, сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтертĕмĕр. Государство умĕнчи обязательствăсене пурне те срокчен тата планран иртттерсе тултарнă хыççăн, государствăна татах 400 пăт тырă, 54 пăт аш-какай патăмăр.

Выльăх-чĕрлĕхсен йышне ӳстерес енĕпе те иртнĕ 1942 çул тухăçлă пулчĕ. Сурăхсене çулталăкра икшер хут пăрамлаттарса кашни 100 сурăх пуçне 220 путек илме пултартăмăр, кашни ĕнерен 1.636 литр сĕт суса илтĕмĕр, кашни чăх 110-шер çăмарта турĕ.

Анчах пирĕн колхоз тунă çитĕнӳсемпе чарăнса тăмĕ. Фронта лайăхрах пулăшас тесе, эпир 1943 ялхуçалăх çулĕнче татах та тимлĕнрех ĕçлĕпĕр. Халĕ колхозăн хирĕсенче хĕрӳ ĕç пырать. Тырăсене хăвăрт та лайăх пахалăхпа акса хăварассишĕн колхозниксем кунĕн-çĕрĕн ĕçлеççĕ. Çуракине эпир кăçал 6 кун хушшинче пĕтерме шутлатпăр. Сухаçăсем икĕ касăллă плугпа куллненех 1,75—2-шер гектар сухаласа пыраççĕ. Паянхи куна çураки планне 48 процент пурнăçларăмăр.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе пирĕн колхоз 1943 çулти плана пур выльăхсем енĕпе те иртттерсе тултарчĕ. Анчах эпир çакăнпа лăплансa лармастпăр. Выльăх-чĕрлĕхсен йышне хамăр фермăсенче 150 процент чухлĕ ӳстерессишĕн тăрăшатпăр. Çакăнпа пĕрлех пирĕн колхоз нимĕç оккупанчĕсенчен сиен курнă колхозниксемпе колхозницăсене пулăшма 5 ĕне, 8 сурăх. 10 пус сысна уйăрса пачĕ.

Я. Музалов,
«Молодая сила» колхоз председателĕ.

Республикăри колхозсенче çураки ĕçĕсем Майăн 1-мĕшĕ тĕлне мĕнле пынине кăтартакан

СВОДКА

Районсем	Çурхи тырăсем акнă (процентпа)
Калинино	53,6
Елчĕк	45,8
Вăрнар	40,6
Чкаловски	37,0
Комсомольски	36,5
Первомайски	32,2
Йĕпреç	30,0
Красноармейски	30,0
Шăхасан	29,4
Етĕрне	28,6
Шăмăршă	28,6
Элĕк	27,8
Улатăр	26,9
Шупашкар	25,5
Хĕрлĕ Чутай	25,4
Советски	25,2
Çĕрпӳ	23,6
Сĕнтĕрвăрри	23,2
Сĕнтĕр	23,1
Канаш	22,4
Çĕмĕрле	18,3
Октябрьски	16,7
Ишлей	16,6
Куславкка	16,3
Пăрачкав	15,1
Тăвай	13,3
Кувакино	11,7
Вăрмар	8,9
Шупашкар хули	3,5
ЧАССР тăрăх	26,4

ĂМĂРТСА ĔÇЛЕÇÇĔ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Буденный тата Тельман ячĕсемпе тăракан колхозсем çуракине пысăк пахалăхпа тата хăвăрт туса иртттерессишĕн пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем пурте ĕçре. Буденный ячĕпе тăракан колхоз тăвата талăк хушшинче 123 гектар сухаласа 110 гектар акнă. Суха тăвакан комсомолецсем Иванов, Громилов юлташсем ĕç нормине кулленех 120—130 процент тултарса пыраççĕ. Çамрăксен çуракинчи ĕçне ватă колхозник Данил Архипов юлташ сăнаса тăрать. Ăна колхоз правленийĕ çураки ĕçĕсен пахалăхне сăнаса тăма хушнă. Хăйĕн обязанноçне вăл лайăх пурнăçлать. Çамрăксене суха тума вĕрентет, йăнăшсене çийĕнчех тӳрлетет.

Тельман ячĕпе тăракан колхозра çураки пахалăхĕшĕн çине тарса кĕрешеççĕ. Колхоз председателĕ коммунист-фронтовик В. Павлов юлташ тырăсене нумайрах яровизацилесе акассишĕн тăрăшать. Яровизациленĕ вăрлăхпа паянхи куна колхоз 91 гектар акнă, 60 центнер сĕруллми яровизациелнĕ.

Ку колхозсенче лашасене кăнтăрлахисĕр пуçне тата кашни сехет хыççăн кĕске вăхăт хушши чарăнса тăрса апат çитереççĕ. Çапла тунипе вĕсем лашасен ĕç тухăслăхне ӳстереççĕ.

В. Любимов.

Ют çĕршывсенче

Сталин юлташăн Майăн пĕрремешенчи приказне Англи пичечĕ пит пысăк хак парать

ЛОНДОН, майăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Англи пичечĕ тата радио Сталин юлташăн майăн пĕрремĕшĕнчи приказĕ çинчен нумай çыраççĕ, нумай калаççĕ.

Информаци министерствин пичет валли панă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: «Сталин приказне Лондонра пĕрлешӳллĕ нацисен ĕçĕнче пит паллă вырăн йышăнса тăракан декларацие тесе шутлаççĕ. Союзниксем хушшинче хирĕçӳсем кăларма шутлакан гитлеровецсене Сталин тăрăшыв çине кăларнипе уйрăмăнах ăшă кăмăлпа йышăннă».

Рейтер агентствин дипломати обозревателĕ Сталин юлташăн Майăн пĕрремĕшĕнчи приказне Лондонра ăшшăн йышăнни çинчен пĕлтерет. Вăл каланă тăрăх, Россия союзникĕсен Çурçĕр Африкăри çĕнтерӳллĕ войскисене Сталин ырланине тата «Англипе Америкăн паттăр авиацийĕ» Германипе Италие вăйлăн пыра-пыра çапнине ырланине кунта уйрăмăнах паллă тăваççĕ.

Сталин юлташ приказне политикăллă паллă документ вырăнне хурса, Лондонри радио çакна паллă тăвать: вăл приказ «гитлерла пропаганда Германи аллинчи çĕршывсенчи халăхсене пĕрлешӳллĕ нацисем хушшинче хирĕçӳсем пур тесе ĕнентерме хăтланнине вирлĕн пырса çапать. Сталин приказĕнче вырăс халăхĕ тăшмана çĕмĕрсе тăкиччене х кĕрешме тăрăшнине кăтартса панă. Çакăнпа пĕрлех вăл приказ вырăс халăхне çапăçура вăл пĕччен мар пулнине, пĕрлешӳллĕ нацисен хĕçпăшаллă вăйĕсен ĕçĕсем иккĕмĕш фронт уçассине пĕлтернине шанма парать».

«Обсервер» хаçат Сталин юлташăн майăн пĕрремĕшĕнчи приказне «политика тĕлĕшĕнчен çав тери паллă япала пулса тăрать» тесе хаклать. Союзниксен пĕрлĕхне хавшатма Гитлер ĕмĕтленнĕ пур шанчăксене те вăл приказ ывăтса ярать, çавăн пекех Хĕвеланăçĕнче е Хĕвелтухăçĕнче уйрăмăн мир тăвас шанчăксене те путлантарать. «Вăрçă лару-тăрăвне приказра пăхса тухни, — тесе çырать хаçат, — лăпкă оптимизмпа тата Германири ӳссе пыракан кризиса тĕрĕс хакланипе палăрса тăрать».

«Санди Диспетч» хаçатăн дипломати обозревателĕ çапла çырать: «Сталин приказĕ союзниксене уйăрма ĕмĕтленнĕ Германин çĕнĕ кампанине сирсе пăрахрĕ», тет. Вăл çакна палăртать: гитлеровецсем çапла хăтланнисем вĕсем «хăйсене кĕтекен катастрофăна çар средствисемпе сирсе яма пултарайманни çинчен калаçса пăраççĕ».

Верховный Главнокомандующин Совет Союз Маршалĕн И. Сталин юлташăн приказĕ США-ра хисеплĕ вырăн йышăнать

НЬЮ-ЙОРК, майăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Верховный Главнокомандующин Совет Союз Маршалĕн И. Сталин юлташăн приказĕ Америка общественноçĕ хушшинче паллă вырăн йышăнса тăрать. Америкăри радио, Ассошиэйтед пресс тата Юнайтед пресс агентствисем вăл приказа анлăн сараççĕ. Нью-Йорк, Вашингтон, Чикаго хаçачĕсем вăл приказа пĕрремĕш страницăсем синче пичетлесе кăларнă.

Хаçатсем Сталин юлташăн приказĕнче Хĕвелтухăçĕнчен, Хĕрлĕ Çарĕнчен тăшмана пырса çапни Хĕвеланăçĕнчен, союзниксен войскисем пырса çапнипе пĕрлешсе — пĕтĕмĕшлĕн пĕрле пырса çапни пулса тăни çинчен каланине заголовоксенче уйрăмăнах паллă тăваççĕ. Çавăн пекех хаçатсем Сталин юлташ тăшмана çĕнтерессине пĕр иккĕленмесĕр ĕненсе тăнине те палăртаççĕ.

АМЕРИКА САМОЛЕЧĔСЕМ АТЛАНТИКА ОКЕАНĔ УРЛĂ МАССĂЛЛĂН ВĔÇСЕ КАÇНИ

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Çар министерствин представителĕ çапла пĕлтернĕ: хальхи вăхăтра «Вĕçекен крепость» йышши бомбардировщиксем икĕ моторлă «Лантнинг» истребительсемпе тата транспортнăй самолетсемпе пĕрле Атлантика океанĕ урлă Çурçĕр Африкăна тата вăрçă пыракан ытти çĕрсене те массăллăн вĕçсе каçаççĕ.

Вăрттăн маршрутпа малтанхи хут массăллăн вĕçсе каçнă чухне темиçе çĕр самолет пулнă. Вĕсенчен пĕри кăна тинĕсре пĕтнĕ, 6-шĕ ларнă чухне сиенленнĕ.

Нумай истребительсем Калифорнирен Африкăна вĕçсе пыраççĕ. Англи урлă вĕçнĕ чухне вĕсем 13.000 километра яхăн тăваççĕ. Атлантика океанĕн кăнтăр пайĕнчи маршрутпа вĕçсен вĕсене тата вăрăмрах çул тума лекет. Инçене вĕçме уйрăм кислород приборĕсем тата горючи валли баксем лартнă.

Фронтсене самолетсене сывлăш тăрăх яни тинĕс флотне чылай пулăшать.

ЛАТИНЛА АМЕРИКĂРИ СЛАВЯНСЕН ПĔРРЕМĔШ КОНГРЕСĔ

Монтевидеоран (Уругвай) пĕлтернĕ тăрăх, Латинла Америкăра пурăнакан славянсен пĕрремĕш конгресĕ пулса иртнĕ. Конгресра Аргентинăра, Уругвайра, Чилире, Бразилире, Боливире тата Парагвайра пурăнакан славянсенчен 384 делегат пулнă. Конгресс умĕнче гитлеризма хирĕç кĕрешме икĕ миллион славянсене пĕрлештерес задача тăнă. Конгресс Латинла Америкăри славянсен пур обществисене те пĕрлештерес плана йышăннă. Йышăннă резолюцире конгресс çынçиен Гитлер славян халăхĕсене пĕтерейрес суккине, гитлеровецсем пĕтессине шанса тăнине палăртать. Латинла Америкăри çĕршывсенчи славян обществисене конгресс фашистла пиллĕкмĕш колоннăн сăтăрла ĕçĕсене хирĕç татăклăн кĕрешме чĕннĕ. (ТАСС).

Депутат çырăвĕ

Улатăрти 366-мĕш суйлав округĕнчен СССР Верховный Совечĕн депутатне суйланă Л. С. Спасов юлташ хăйĕн суйлавçисене пĕлтерме редакцие çакăн пек çыру ярса пачĕ:

Юлташсем, Сире фронтран, Сталинграда хӳтĕлесе чапа тухнă 62-мĕш Армирен хĕрӳллĕ салам яратăп.

Вăрçа пула сирĕн заводсенче, колхозсенче, шкулсенче нумай вăхăт хушши пулаймарăм. Халĕ те çак çырăва янипе çеç чарăнса тăма тивет. Вăрçă пĕтсен, тăван çĕршыва нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсенчен тасатсан пĕр-пĕринпе тĕл пулăпăр, чун-чĕререн калаçăпăр.

62-мĕш Армире эпĕ ăна туса йĕркеленĕ вăхăтранпах службăра тăратăп. Эпĕ унта пирĕн хисеплĕ çулпуç Сталин юлташ ячĕпе тăракан хулашăн — Сталинградшăн пынă кĕрешĕвĕн чаплă çулне утса тухрăм.

Пирĕн Арми Сталинградра 3 уйăх ытларах çапăçрĕ, тăшманăн тĕп вăйĕсене сирсе тăчĕ. Вăл тăван çĕрĕн кашни метрне паттăррăн хӳтĕлерĕ, йывăр условисенче кашни çуртшăн, кашни урамшăн, кашни кварталшăн пĕр чарăнмасăр çапăçрĕ. Сталинград Атăлăн çирĕп крепоçĕ, нимĕç захватчикĕсем çĕмĕрсе кĕреймен аслă крепость пулса тăчĕ.

Пирĕн çарсем çирĕппĕн хирĕç тăнине курса, Гитлер Сталинград çине хăйĕн суйласа илнĕ чи лайăх войскисене ячĕ, мĕнпур хĕçпăшалпа çав тери тискеррĕн усă курчĕ. Пирĕн çине кунĕн-çĕрĕн пĕр вĕçĕмсĕр çĕршер самолет бомбăсем тăкрĕç, пирĕн çине тăшманăн пиншер туписемпе миномечĕсем персе тăчĕç, пулеметсемпе автоматсен сасси чарăнмарĕ, пирĕн войскăсене таптаса çĕмĕрессишĕн çуннă тăшман танкĕсен кĕрлевĕ пĕр вăхăтлăха та чарăнмарĕ. Каламалли те çук, «шăрăхчĕ» ун чухне. Анчах пирĕн 62-мĕш Арми Сталин хулине геройла хӳтĕлесе хăварчĕ, совет хĕçпăшалĕн мухтавне çӳле çĕклерĕ.

Чи вăйлă çапăçусем пулса иртнĕ уйăхсенче (сентябрь—ноябрь) пирĕн Çар умĕнче 330 пинлĕ çар тăнă. Çапла пирĕн 62-мĕш Арми тăшман пысăк вăйпа тапăннине тӳссе ирттерме пултарчĕ. Çакă вăл пирĕн рядовой боецран генерала çитиччене тăшмана хирĕç арăслан пек çапăçнинчен, тăван çĕршывăн приказне, Сталин юлташпа халăхăн ирĕкне тӳррĕн пурнăçласа пыннинчен килчĕ.

Болюто, Олейников, Самойлов, Беликов бронебойщиксен вилĕмсĕр ĕçĕсем çинчен кам пĕлмест? Вĕсем нимĕçсен 30 танкĕн атакине сирсе янă. Тăшманăн 70 танкĕпе йышлă пехотине хирĕç çапăçăва хăюллăн кĕнĕ 33 герой çинчен пурте пĕлеççĕ. Вĕсем тăшмана хăйсен рубежĕ патне кĕртмен. Çак 33 герой 2 сехет хушшинчи çапăçура çунакан шĕвек тултарнă бутылкăсемпе тата гранатăсемпе фашистсен 27 танкне çунтарса янă, 150 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Çак çапăçура 3—4 вăрă-хурахран кая мар вĕлернĕ пĕр боец та пулман. Пирĕн 62-мĕш Армири çĕршер те пиншер геройсем çак геройсем пек çапăçнă. Вĕсем харама пĕлмен.

Арми командующийĕ генерал-лейтенант Чуйков, Çар Совечĕн Члене генерал-лейтенант Гуров, штаб начальникĕ генерал-майор Крылов, Арми политотделĕн начальникĕ генерал-майор Васильев юлташсем йывăр çапăçусем вăхăтĕнче Сталинград хулине пĕр сехетлĕхе те пăрахса тухман, вĕсем малти линирен 50—150—200 метрта вырнаçнă командăнай пунктра çапăçăва ертсе пынă.

Пирĕн çарăн тылĕ те огневой позицисенчех, малти линирен 4 километрта кăна тăнă. Артиллерирен тата минометсенчен вут-хĕм тăкса тăнă вăхăтрах вĕсем войскăсем парса тăнă, продовольстви тата артиллери запасĕсене Сталинград хулинчех, тăшман вут-хĕмĕ айĕнче парса тăнă. Тăвата уйăх хушшинче тăшман пĕр чарăнмасăр персе тăнă вăхăтра эпир Атăл урлă продовольстви, снарядсем, минăсем, патронсем, войскăсем иле-иле каçнă.

Санитари службинче тăракан работниксем те паттăрлăх кăтартрĕç. Вĕсем çулăмлă Сталинградра, блиндажсенчех операцисем турĕç, аманнă красноармеецсемпе командирсене тĕрлĕ майсемпе Атăл урлă иле-иле каçарчĕç.

Пирĕн Армири боецсемпе командирсем—сталинла гвардин геройĕсем пулса тăраççĕ. Вĕсем хăйсен кăкăрĕсем çинче «Сталинграда хӳтĕленĕшĕн» илнĕ медале тава тивĕçлĕн йăтса çӳрĕç.

Пирĕн 62-мĕш Армири боецсемпе командирсем хушшинче чăвашсем те сахал мар. Эпĕ хамăр землякcене чылай соединенисемпе чаçсенче тĕл пултăм. Командирсем хакланă тăрăх, вĕсем паттăррăн çапăçнă, вĕсем хушшинче награда илнисем нумай.

Пирĕн боецсемпе командирсем, хаяр та йывăр кĕрешӳсенче пиçĕхнĕскерсем, сталинла гвардин боевой ялавне чыслăн малалла йăтса кайĕç. Вĕсем хамăрăн тăван çĕре фашистла ирсĕрсенчен тасатассишĕн, нимĕç çăханĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех аркатса тăкассишĕн чăн-чăн арăслансем пекех çапăçĕç.

Эпĕ хаçатсенче Чăваш республикинчи ĕççыннисем Хĕрлĕ Çар валли танксемпе самолетсем тума миллионшар тенкĕ укçа пухни çинчен вуласа пĕлтĕм. Сталин юлташ Сире ăшшăн тав турĕ. Улатăр хулинчен заводсем производство программисене ăнăçлăн тултарни çинчен, Шăмăршă районĕнчи ĕççыннисем вăрман хатĕрлевĕсене начар мар туса пыни çинчен çырса пĕлтерчĕç. Кунпа пĕрлех хăшпĕр предприятисемпе колхозсенче тата шкулсенче çитменлĕхсем пурри çинчен те пĕлтерчĕç.

Халĕ нимĕнле ĕçре те кая юлма юрамасть. Кашни çыннăн хăйĕн ĕçĕнче вăрçăри пек туяс пулать. Унăн тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçе чыслăн пурнăçлас пулать. Мĕншĕн тесен унăн пархатарлă ĕçĕ пирĕн çĕнтерӳ сехетне çывхартать.

Эсир ĕçре пирĕн 62-мĕш Армин боецĕсем пек çирĕп те паттăр пулăр. Ун чухне вара кирек мĕнле йывăрлăха та çĕнтерме пулать.

Сире пĕтĕм чĕререн ăнăçлăх сунатăп.

Хам çинчен нимех те калама пултараймастăп. Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçе пурнăçласа пыратăп, çапăçури ĕçсемшĕн «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕ илтĕм.

Хăвăрăн пурнăçăрпа ĕçĕрсем çинчен çырăр. Сирĕн çырăвăрсене хавасланасах кĕтетĕп. Манăн адрес: 2024 Полевая почта, 297 часть.

СССР Верховный Совечĕн Депутачĕ Л. СПАСОВ.

АНГЛИН ПОДВОДНĂЙ ЛОДКИСЕМ ВĂТАÇĔР ТИНĔСРЕ КĔРЕШНИ

ЛОНДОН, майăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксем Çурçĕр Африкăна пырса кĕнĕренпе Англин подводнăй лодкисем Вăтаçĕр тинĕсре тăшманăн 204 карапне путарнă е сиенленĕ. Вăл шутра тăшманăн Тунисри войскисем валли боеприпассем, апат-çимĕç тата çар снаряженийĕ турттарса пыракан нумай танкерсене, пароходсене путарнă.

Тунисри çапăçусем вĕçленсе пынăçемĕн Англин подводнăй лодкисем тăшманăн çыхăну линийĕсене хирĕç кĕрешесси вăйлăлансах пырать.

Англин подводнăй лодкисем çĕр çинче пыракан çапăçусене те хутшăннă. Вĕсем тăшманăн çарĕсем Çурçĕр Африкăра усă куракан стратеги тĕлĕшпе паллă чугунçулсене, шоссе çулĕсене, кĕперсене пенĕ.

ЛАВАЛЕ ВĔЛЕРМЕ ТĂНИ

ЛОНДОН, майăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви илнĕ пĕлтерӳсем тăрăх, пĕр пунктра Гитлерпа вăрттăн калаçнă хыççăн Францие таврăнакан Лавале вĕлерме тăнă. Лавальпе пĕрле пулнă Вишин финанс «министрне» Каталана йывăр амантнă.

Пĕлтерӳ

Майăн 5-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, Советсен Çуртĕн ларусем иртттерекен залĕнче большевикла пичет кунĕ ячĕпе партипе совет тата рабселькорсен активĕн пухăвĕ пулать.

Билетсене ВКП(б) Горкомĕн пропаганда пайĕнче (124-мĕш пӳлĕмре) илмелле.

ВКП(б) Горкомĕ, «Красная Чувашия» тата «Чăваш Коммуни» хаçат редакцийĕсем.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Маслопромăн Чăваш трестне трестра тата çу завочĕсенче ялан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: главнăй бухгалтер заместителĕ, финревизорсем, старши бухгалтерсем, сĕт промышленноçĕн технологĕсем.
Ĕçукçи килĕшнĕ тăрăх. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар, 2-мĕш Герцен урамĕ 32. Главнăй бухгалтертан ыйтмалла.
2—1.

Мукомолсен союзĕн Чăваш обкомне бухгалтер кирлĕ. Ĕçукçи 700 тенкĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле:
Атăл Набережнăйĕ ур., 13. Телефон 5—26.

Рабочисемпе учениксем (хĕрарăмсем пулсан аван тарах), машинистсем, машинист помощникĕсем, смазчиксем тата техничкăсем кирлĕ
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар Чувашская урамĕ, 66. кадрсен пайĕ.
2—1.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТРА çакăн пек работниксем кирлĕ: администратор, бухгалтер, сторожсем, дверник, билетерсем, уборщицăсем, художник, паровой отоплени механикĕ. водопроводчик, полотер-вахтер.
4—1

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

... СНК ЧА ССР. Заказ № 2 Ф 6 58 42 п.